ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "КИЛ-ÇУРТ ХУТШĂНĂВĔСЕНЕ ЙĔРКЕЛЕССИ ÇИНЧЕН" САККУНĔН 23^4 СТАТЙИНЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2023 çулхи утă уйăхĕн 6-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Кил-çурт хутшăнăвĕсене йĕркелесси çинчен" 2005 çулхи юпа уйăхĕн 17-мĕшĕнчи 42 №-лĕ саккунĕн (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2005, 64 №; 2006, 71 №; 2007, 74 №; 2008, 75, 77 №-сем; 2009, 82 №; 2010, 84 №; 2011, 90 №; 2012, 92 № (I том); Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 6 №; 2015, 6 №; 2016, 4, 10 №-сем; 2017, 9 №; "Республика" хаçат, 2018, çу уйăхĕн 8-мĕшĕ; 2019, пуш уйăхĕн 6-мĕшĕ, пуш уйăхĕн 13-мĕшĕ, çу уйăхĕн 15-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2020, пуш уйăхĕн 11-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2021, çу уйăхĕн 26-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; 2022, ака уйăхĕн 6-мĕшĕ, утă уйăхĕн 13-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 22-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2023, ака уйăхĕн 5-мĕшĕ) 23^4 статйин 1-мĕш пайне çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) пĕрремĕш абзацра "23 çула çитнĕ" сăмахсене "21 çула çитнĕ" сăмахсемпе улăштарас;

2) 4-мĕш пункта çакăн пек çырса абзацсем хушса хурас:

"е тата призывпа çар службинче тăрать (тăнă) пулсан;

е тата ăна I е II ушкăнри инвалид тесе йышăннă пулсан;

е тата вăл I ушкăнри инвалида, медицина организацийĕн пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх тăтăшах пăхса тăмалла тесе йышăннă ватă çынна, е 80 çула çитнĕ ватă çынна пăхать пулсан;".

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О.Николаев

Шупашкар хулли
2023 çулхи утă уйăхĕн 7-мĕшĕ
45 №